28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРЬ 27 ШАМАТКУН 209 (6960) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Хамăрăн чи пирвайхи тивĕçе вăхăтра пурнăçа кĕртессишĕн!

Социализмлă Тăван çĕршыв Октябрьти революци пулнăранпа 28 çул тултарнине уявлама хатĕрленет. Çак чаплă уява пирĕн рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци çулсеренех пысăк ÿсĕмсемпе кĕтсе илессĕ. Кăçал та уяв умĕнхи ăмăрту хуласемпе колхозсенче анлăн сарăлса пырать.

Иртнĕ 1944 çулта, вăрçă пынă йывăр вăхăт пулнă пулин те, пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем Октябрьти революци праçникне пысăк çитĕнÿ тунипе кĕтсе илчĕç—государствăна тырă памалли обязательствăна уяв тĕлне, пĕтĕмĕшпе илсен, тултарчĕç. Паллах ĕнтĕ, кăçал пĕлтĕрхинчен начартарах ĕçлеме пирĕн нимĕнле сăлтавсем те пулма пултараймаççĕ, çук та.

Государствăна тырă парасси—колхозсен чи ответлă та чи хисеплĕ задачи пулса тăрать. Тырă памалли плана тултарайман колхоз лайăх колхоз пулма пултараймасть. Колхоз мĕнле ĕçленине хакланă чух яланах виçĕ тĕп ыйту çине çаврăнса пăхмалла: государствăна тырă парас ĕçе колхоз вăхăтра пурнăçланă-и, колхозăн обществăлла хуçалăхĕ тĕреклленсе пырать-и, артель колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх çителĕклĕ таран тырă валеçсе парать-и. Çак ыйтусенчен пĕрне те пулин пурнăçласа пырайман колхоз большевикла колхоз, лайăх ĕçлекен колхоз шутланма пултараймасть.

Çапла ĕнтĕ, колхозăн чи пирвайхи тивĕçĕ—государствăна тырă парса татасси. «Тырпулшăн кĕрешни—социализмшăн кĕрешни», тенĕ пирĕн аслă çулпуç Ленин.

Республикăри нумай колхозсем хăйсен чи пирвайхи тивĕçне вăхăтра та пĕтĕмпех пурнăçа кĕртрĕç. Государствăна тырă парса татнă колхозсен йышĕ халĕ ĕнтĕ 600-тен те иртет. Уйрăмах Вăрнар районĕнчи колхозсем лайăх ĕçлерĕç: вĕсем государствăна тырă памалли обязательствăна октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 105 процент ытла тултарчĕç. Муркаш, Советски, Сĕнтĕр тата ытти хăшпĕр районсем те хăйсен чи пирвайхи тивĕçне çак кунсенчех пурнăçлаççĕ.

Пур районсемпе колхозсем те Вăрнар районĕ пек ĕçленĕ пулсан, пирĕн республикăн чысĕ те çÿлте пулнă пулĕччĕ, колхозсем те тĕреклĕрех пулнă пулĕччĕç, колхозниксен пурнăçĕ те лайăхрах пулнă пулĕччĕ. Анчах, вăрнарсем пек ĕçлеме пур условисем те пулнă пулин те, чылай районсем кăçал государствăна тырă парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Час-часах хăшпĕр ертсе пыракан юлташсем çапла калании илтме пулать: «Эпир хамăрăн тырă памалли обязательствăсене пурпĕрех пурнăçа кĕртетпĕр, уншăн эсир ан шикленĕр», теççĕ вĕсем. Анчах хăçан пурнăçа кĕртесси пирки сăмах хускатма юратмаççĕ. Государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултармалла кăна мар, тата ăна вăхăтра тултармалла. Çакна вара çÿлте асăннă юлташсем манаççĕ.

Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне республика государствăна тырă памалли плана 80 процент ытларах кăна тултарчĕ. Кувакино, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă тата ытти районсем вара хăйсен планне унтан та сахалтарах пурнăçланă. Калас пулать, çак районсенче юлашки вăхăтра тырă хатĕрлевĕн хăвăртлăхĕсем ÿсес вырăнне чылаях чакрĕç, мĕншĕн тесен вăл районсен руководителĕсем халĕ те йывăрлăхсем пирки калаçса ларма пăрахмаççĕ-ха. Сăмах та çук, çав асăннă районсенче йывăрлăхсем пур, ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пыма вĕсене çăмăлах мар. Анчах чăн-чăн большевиксен задачи шăпах ĕнтĕ мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе ĕçе вăхăтра та чыслăн пурнăçа кĕртесси пулать те.

Хăшпĕр колхозсен председателĕсем государствăна тырă парас ĕçе пĕлетăркачах вăраха ярса пырççĕ. Çакă вара государствăна та, колхоза та, колхозниксене хăйсене те сиен кăна кÿрет, мĕншĕн тесен государствăна памалли тырра кирек хăçан пулсан та пурпĕрех парса татмалла. Кая хăварса пыни ĕçе йывăрлатма кăна пултарать. Çавăнпа та: «государствăна пама тăхтас: хамăр валли ытларах хăварас», тесе ĕçе чарса тăракан колхоз председателĕсене, саботажниксем вырăнне шутласа, çирĕп ответ тыттармалла. Кунта çакна ăнланас пулать: государство колхоз çĕрĕн кашни гектарĕнчен пĕр центнера яхăн кăна тырă илет, колхоз гектартан 10 центнер тырă туса илнĕ пулсан, ытти 9 центнерĕ йăлтах ăна юлать. Çавăнпа та колхоз председателĕ тата колхоз правленийĕ колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх тырă валеçсе памаççĕ пулсан, уншăн никам та мар, хăйсемех айăплă. Çакă вăл колхоз вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешменнине, тырпула перекетлĕн тыткаламаннине тата тăккаланчăксене хирĕç кĕрешменнине çеç кăтартса парать, государствăна тырă парас ĕçе чăрмантаракан сăлтав пулса тăма пултараймасть.

Халĕ ĕнтĕ тырă хатĕрлевĕн ăнăçлăхне юлса пыракан колхозсенче ĕçе организацилеме пĕлни, вĕсене кирлĕ пек пулăшма пĕлни татса парать. Государствăна тырă парса татас тĕлĕшпе республика хăй илнĕ срок çитиччен шутлă кунсем кăна юлчĕç. Парти райкомĕсемпе райисполкомсен, хатĕрлев организацийĕсемпе колхоз председателĕсен, çак ответлă задачăна пурнăçа кĕртес тесе, хальхи татăклă кунсенче пĕтĕм вăя хурса ĕçлес пулать, кашни колхоз кашни кунах государствăна тырă леçмелле тăвас пулать.

Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май, ĕççыннисен патриотла кăмăлĕ çĕкленсе пырать. Политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатса, социализмлă ăмăрту хумне сарса пырса, колхозниксемпе колхозницăсене хамăрăн патриотла тивĕçе вăхăтра пурнăçа кĕртме—государствăна тырă парса татма мобилизацилемелле,—çакăн пек задача тăрать халĕ ялти партипе совет, комсомол тата хатĕрлев организацийĕсем умĕнче.

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

Государствăна планран ирттерсе тырă параççĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Восток», «Пищевик», «Коминтерн», Ворошилов тата Молотов ячĕсемпе тăракан колхозсем октябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне государствăна тыра памалли плана 108 процент тултарчĕç. Халĕ ку колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ.

ХĔРЛĔ ÇАР ФОНДНЕ 270 ПАТ ТЫРĂ, 300 ПАТ ÇĔРУЛМИ ПАНĂ

Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз (председателĕ Ф. Пайманов) хăйĕн пĕрремĕш тивĕçне—государствăна тырă парас задачăна çуллепех чыслăн пурнăçласа пырать.

Колхоз кăçал та государствăна тырăпа çĕрулмие пĕтĕмпех парса татрĕ, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 270 пăт тырă, 300 пăт çĕрулми панă.

Государствăна тырă леçес тĕлĕшпе колхозăн транспорт бригади çĕрĕн-кунĕн ĕçлерĕ.

Колхоз ытти ялхуçалăх продукчĕсене те государствăна 1945 çулшăн пĕтĕмпех парса татнă.

В. ЧИГАРКИН.

Кĕлте турттарас, авăн çапас тата çĕрулми кăларас ĕçсене хăвăртлатар

КАНАШ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 54 колхозран паянхи куна 7 колхоз авăн çапса пĕтерне. Ку тĕлĕшпе «Новая жизнь», «Хавас», «Чуваш ЦИК», «Вторая пятилетка», Буденный тата Доронин ячĕсемпе тăракан колхозсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕç. Çавăн пекех «Правда», «Ударник» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем те çак кунсенчех авăн çапса пĕтереççĕ. Районри малта пыракан колхозсем авăн çапнипе пĕрлех çĕрулми те кăларса пĕтерчĕç.

Анчах «Идея Ленина», «Красное знамя», «Комбайн», «Самолет» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем ку тĕлĕшпе ытла та япăх ĕçлеççĕ. «Идея Ленина» колхозăн тата 12 гектар çĕрулми кăлармалла, 200 гектар çинчи кĕлтене турттармалла. Партин колхозри пуçламĕш организаци секретарĕ Иванова юлташ, колхозри çитменлĕхсене пĕлсе тăнă çĕртех, нимĕнле мера та йышăнмасть. Коммунистсене агитмассăллă ĕçе явăçтарман. Колхозри çитменлĕхсем çинчен партин пухăвĕсенче сутсе-явас вырăнне парторганизаци секретарĕ Иванова юлташ: «Эпĕ колхозри çитменлĕхсем çинчен калама хăратăп, кайран аван мар пулать», тесе ларать. 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Платонов юлташ кăларнă çĕрулмине кунĕпех уйра вырттарса шăнтса янă. Кунсăр пуçне, ку бригадăн 8 гектар клевер тата 1.5 гектар çуртырри вырмасăр юр айне кайнă. Анчах колхоз правленийĕ кун пирки паянхи куна çитсе те нимĕнле мера та йышăнман.

Çавăн пекех «Красное знамя» колхоз 8 гектар, «Комбайн» колхоз 9 гектар, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 6 гектар çĕрулми кăларса пĕтермен.

Кĕлте турттарас тĕлĕшпе те чылай колхозсем вăрах ĕçлеççĕ. «Коммунар» колхозăн тата 80 гектар çинчи кĕлтене турттармалла.

М. КОЗИН,
Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

14 колхоз кăна авăн çапса пĕтернĕ

КÿКЕÇ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Иккассинчи «1-ое мая» колхоз (председателĕ Ковалевский юлташ)—районра чи пысăк колхозсенчен пĕри. Колхозра пурĕ 7 бригада. Колхозра партин пуçламĕш организацийĕ те пур, коммунистсенчен 5-шĕ правлени членĕнче тăраççĕ. Анчах апла пулин те колхоз ялхуçалăх ĕçĕсенче юлса пырать. Паянхи куна колхоз 60 гектар çинчи кĕлтене турттарса пĕтермен, 3 гектар çĕрулми кăларман, государствăна 30 тонна тырă парса татман. Çак юлашки пилĕккунлăхра вара колхоз государствăна пĕр центнер та тырă леçмен.

Кун пек юлса пыракан колхозсем районра татах та пур. Сарапайкасси ял Советĕнчи колхозсем государствăна 105 тонна çĕрулми, 90 тонна пахчаçимĕç, 35 тонна тырă парса татман. Альгешри Кадыков ячĕпе тăракан колхоз та (председателĕ Егоров юлташ) кĕлте турттарас тата çĕрулми кăларас ĕçсене ытла вăраххăн туса пырать. Колхозăн государствăна тата 5 тонна тырă памалла. Çавăн пекех Шĕнерпуç ял Советĕнчи колхозсем те государствăна тырă, çĕрулми тата пахчаçимĕç парса татас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Районĕпе паянхи куна 900 гектар çинчи кĕлтене турттармалла, 60 гектар çĕрулми кăлармалла, 2.800 гектар çинчи тырра çапмалла.

Районри 101 колхозран çак тарана çитсе 48 колхоз кăна кĕлте турттарса пĕтернĕ. Авăн çапас ĕç татах та япăхрах пырать. Районĕпе 14 колхоз кăна авăн çапса пĕтернĕ. Юлса пыракан колхозсен ĕç хăвăртлăхне ÿстермелле.

Тырă вăрланăшăн

Первомайски районри «Сĕнтерÿ» колхозра А. Митрофанов колхозник кĕраки вăхăтĕнче уя вăрлăх турттарнă. Вăл, А. Григорьева бригадирпа тата тырă акакан Л. Лаврентьевăпа пĕр каварлă пулса, колхоз тыррине 141 килограмм вăрласа юлнă.

Вĕсене ответ тыттарма ĕçе халăх судне панă.

Колхоз активĕ хăй те государство умĕнче парăмлă

ÇĔМĔРЛЕ. Укçа-тенкĕ пухас ĕç районра ытла та çителĕксĕр пулса пырать. Район кварталтан квартала ĕçе сÿрĕклетсе пырать. Пĕрремĕш кварталта плана 86.4 процент тултарнă пулсан, иккĕмĕш кварталта 60.9 процент, виççĕмĕш кварталта вара пурĕ те 36 процент çеç тултарнă.

Мĕншĕн-ха район укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе юлса пырать?

Калас пулать, районри финанс пайĕн работникĕсем финанс агенчĕсемпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Ял Совет исполкомĕсем те ку тĕлĕшпе вăхăтран вăхăта кăна ĕçлеççĕ.

Райсовет исполкомĕ октябрĕн 18-мĕшĕнче укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе юлса пыракан ял Совет исполкомĕсен председателĕсене чĕнсе отчет итлерĕ. Вырăс Улхаш ял Совечĕн тăваттăмĕш кварталта 164 пин тенкĕ пухмалла пулсан, вăл октябрь уйăхĕн вунпилĕк кунĕ хушшинче вунпĕр пин тенкĕ кăна пухнă. Ытти ялсенче те ĕçсем çавăн пекех япăх пыраççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем государствăна 197.227 тенкĕ парăма кĕнĕ.

Государство умĕнчи парăмсене колхозниксемпе единоличниксем кăна мар, ялти тата районри актив та вăхăтра тÿлесе тăмасть. Егоркинăри «Большевик» колхоз председателĕ Корнилов, ял Совет председателĕ Ануфриев, Пренешри «1 Мая» колхоз председателĕ Павлов, «Ударник» колхоз председателĕ Чернов, Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Храмов юлташсен государствăна пиншер тенкĕ ытла тÿлемелле, çапах та вĕсем çак парăма тÿлесе татма васкамаççĕ. Чылай колхозсенче бригадирсем, счетоводсем тата ытти вырăнсенче ĕçлекенсем те пысăк парăма кĕнĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 11 ял Совет тăрăх кăна активран пухмалли парăм 95 пин тенкĕ яхăн шутланать. Магарин ял Советне кĕрекен виçĕ колхоз председателĕ государствăна 5 пин тенкĕ тÿлесе татман.

Лашасемпе ĕçлесе пысăк тупăш илекен единоличниксенчен укçа пухас тĕлĕшпе те финанс работникĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Парăмсене вăхăтра памасăр тăракансене суда панă, анчах районри суд органĕсем вăл ĕçсене темиçе уйăх пăхмасăр вырттараççĕ.

Заем укçине районри 42 колхозран Пренешри «Большевик» колхоз çеç пĕтĕмпех тÿлесе татнă. Магарин, Туван Вăрманкас ял Совечĕсене кĕрекен колхозсем заем укçине парса татма васкамаççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн 200 пин тенкĕ, «Комбинат» колхозăн 203 пин тенкĕ тÿлемелле. Çапла сÿрĕк ĕçленине пула, район заем укçи пухассине пурĕ те 41 процент çеç тултарнă.

Район финанс тĕлĕшĕнчен сахал мар йывăрлăхсем тÿссе ирттерет. Учительсене, ял Совет работникĕсене, вулав çурчĕсен заведующийĕсене ĕç укçи вăхăтра парса пымаççĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ [illegible] панă хыççăн кăна çав парăмсене парса татаççĕ.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас тĕлĕшпе çакăн пек япăх ĕçленипе малашне килĕшме çук. Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн тата финанс работникĕсен ку тĕлĕшпе татăклă улшăну тумалла.

Ан. ТАНЬКОВ.

Выльăх-чĕрлĕх валли ăшă çуртйĕр тата çителĕклĕ апат пултăр

ÇĔРПÿ, октябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунта ял Совет председателĕсемпе колхоз председателĕсен тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекенсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат тата ăшă çуртйĕрсем хатĕрлес ĕç районра мĕнле пыни çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Д. Митьков юлташ доклад туса пачĕ.

Канашлура пулнисем Октябрьти социализмлă аслă революци 28 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртăва хутшăнса, çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

Кашни колхозрах выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене октябрь уйăхĕнче хĕле хатĕрлесе çитермелле. Государство комиссийĕсен вăл çуртйĕрсене тĕплĕн тĕрĕслесе йышăнмалла, çитменлĕхсене тупсан, вĕсене кĕске вăхăтрах пĕтерме колхозниксене мобилизацилемелле;

Ноябрĕн 1-мĕшĕчен выльăх-чĕрлĕх апатне ферма заведующийĕсемпе фуражирсен аллине памалла. Çавăнпа та кашни колхозрах выльăх апачĕн балансне туса пĕтермелле. Выльăх апачĕн 3 пайĕнчен пĕр пайне ферма çурчĕсен çывăхне илсе пымалла;

Государствăна аш-какай парса татман колхозсем пуррине шута илсе, халех сыснасене самăртма тăратмалла. Октябрьти социализмлă аслă революци 28 çул тултарнă тĕле кашни колхозăн государствăна аш-какай, сĕт-çу тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене те парса татмалла;

Колхозри выльăх-чĕрлĕх сывлăхне ветеринари работникĕсемпе зоотехниксем пăхса тухмалла, чирлĕ выльăхсене сыввисенчен уйăрмалла, кăрчанкăллă е ытти çавăн пек ерекен чирлĕ лашасене сыватас тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла;

Пĕтĕ выльăхсене лайăх пăхса усрас тĕлĕшпе кашни колхозрах ответлă çынсем уйăрмалла. Колхозсенче халех лаша фермисем организацилемелле. Лаша фермисене колхозри мĕнпур кĕсресене тата ăйăрсене памалла;

Ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксен массăллă курсĕсене ирттермелле.

Канашлу çавăн пекех октябрь уйăхĕнче государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татма тата авăн çапса пĕтерме колхозри пĕтĕм вăя мобилизацилеме йышăнчĕ.

Паян кашни колхозрах колхозниксен пухăвĕсем пулса иртессĕ. Çав пухусенче районри канашлу йышăннă обязательствăсене сÿтсе-явса, вĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мероприятисем йышăнаççĕ.

Е. СВЕРЧКОВА

Суйлав законне вĕрентес ыйтупа пухăннă канашлу

КÿКЕÇ. (Телефонпа). Çак кунсенче ял Советсемпе колхоз председателĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Ф. Дмитриев юлташ «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» çинчен доклад туса пачĕ. Канашлава пурĕ 100 çын ытла пухăннă. Канашлу ĕççыннисене суйлав законне ăнлантарас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерме палăртрĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Агитколлектив лайăх ĕçлет

ТĂВАЙ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Тăрмăш ял Советĕнчи агитколлектив (руководителĕ А. Шишкина юлташ) ĕççыннисене «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» ăнлантарас ĕçе лайăх туса пырать. Агитколлективра пурĕ 22 çын, вĕсем пурте коммунистсемпе комсомолецсем. Паянхи куна агитаторсем пурĕ 6 бригадăра занятисем ирттернĕ. Агитаторсенчен уйрăмăнах И. Белков, Д. Григорьев, Т. Григорьева, А. Кириллова, Г. Васильев тата А. Лаврентьева юлташсем лайăх ĕçлеççĕ.

Вл. ИЛЬИН.

Крахмал завочĕсен Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăвĕ

Чăваш республикинчи крахмал завочĕсем Октябрьти социализмлă аслă революци 28 çул тултарнă уява пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Республикăра пурĕ 6 завод, вĕсенчен уйрăмăнах Вăрмарти, Первомайски, Красноармейски тата Елчĕкри крахмал завочĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне крахмал завочĕсем уйăхри плана мĕнпур продукци туса кăларас енĕпе 98 процента яхăн, крахмал туса кăларас енĕпе 156 процент тултарнă.

Крахмал завочĕсенче крахмал, патока тата ытти тĕрлĕ продуктсем туса кăларакан пехсем пур. Çак пехсенчен крахмал тăвакан пехсем лайăх ĕçленипе палăртмалла. Халĕ крахмал тăвакан пехсем планран ирттерсе крахмал туса кăлараççĕ.

Çĕвĕ çĕлекен артельте

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Клара Цеткин ячĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен артель коллективĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пырать. Артель çулталăк планне 90 процента яхăн тултарнă. Уйрăм работницăсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Афанасьева, Захарова, Апехтина, Ивукова, Ярусова тата Миронова юлташсем çĕвĕ çĕлес тĕлĕшпе октябрьти плана 165 процента çити тултарнă. Артель татах та лайăхрах ĕçлеме пултарать. Анчах хăшпĕр заказчиксем хăйсен заказне пурнăçлама хăйсем чăрмантараççĕ. Куславкка комбинатĕнчи ОРС хăйĕн заказне пурнăçлама çип пама пулнă. Анчах вăл ăна паянхи куна çитсе те паман-ха.

Артель хăйĕн производствине пысăклатсах пырать. Ĕççыннисем çĕвĕ çĕлеме заказ нумай панине шута илсе, артель правленийĕ нумаях пулмасть Елчĕк ялĕнче çĕвĕ çĕлекен уйрăм уçрĕ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

„Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн тата Пĕтĕм тĕнчери судăн статутне" кĕнеке туса кăларнă

Политика литературин государство издательстви Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн тата Пĕтĕм тĕнчери судăн статутне уйрăм кĕнеке туса кăларнă. Чи малтан çав кĕнекене СССР Верховный Совет Президиумĕн çав Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн уставне çирĕплетесси çинчен йышăннă указне кĕртнĕ.

Кĕнекене 50.000 экземпляр пичетлесе кăларнă. (ТАСС).

Совет çĕршывĕ тăрăх

ЛЕНА ШЫВĔ ХĔРРИНЧЕ ТУПНА АРХЕОЛОГИ ПАМЯТНИКĔСЕМ

ЛЕНИНГРАД, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Чи инçетри Çурçĕрте тăватă çул пурăннă хыççăн Ленинград хулине Материальнăй культура историйĕн Н. Я. Марр ячĕпе тăракан институчĕн аслă научнăй сотрудникĕ А. П. Окладников таврăннă. Вăл Лена шывĕ хĕрринчи районсене тĕпчесе çÿренĕ. Пăлана, йĕлтĕрпе, кимĕпе тата çуран çÿресе, вăл 4.500 километра яхăн кайнă. Археолога унта пурăнакан якутсемпе эвенксем нумай пулăшнă.

ТАСС корреспонденчĕ Окладников юлташ çапла каласа панă:

— Эпĕ сурсĕрти йăхсен культурин авалхи памятникĕсене нумай тупрăм. Вĕсенчен чи авалхисем çав çĕрсенче мамонтсем пурăннă вăхăтрисем пулса тăраççĕ. Якут АССР-ĕн Олекма тата Лена районĕсенче чи авалхи чул ĕмĕрĕнчи çынсем пурăннă вырăнсене чава-чава пăхрăмăр. Çав вырăнсенче чултан тунă орудисем, выльăх-чĕрлĕх шăммисем тата вучахсем тупрăмăр.

Чул тусем çинчи художествăллă ÿкерчĕксем наука енчен питĕ интереслă пулса тăраççĕ. Çав ÿкерчĕксем сунара çÿренине, тĕн йăлисене, выльăх-чĕрлĕхсен кĕлеткисене кăтартса параççĕ.

Кăçал эпĕ Совет Союзĕн çурçĕр пайĕнче Якутск хулинчен инçех мар вырăнта чул ĕмĕрĕнчи çынсем пуринчен те йышлăрах пурăннă вырăна тупса тĕпчерĕм. Çав вырăнăн лаптăкĕ 4 гектара яхăн пулать. Унта чавса, питĕ лайăх тунă чул орудисем—сăнăсемпе ухăсен вĕçĕсене, хыракан тата касакан хатĕрсем тупрăмăр, çавăн пекех тата питĕ илемлĕ чул сăпăт-çапасем тата шăмăран тунă япаласем тупрăмăр.

Укерчĕк çинче: Сталинградри 9-мĕш шкул çурчĕ. Нимĕç захватчикĕсем сиенлесе хăварнă хыççăн ăна çĕнĕрен юсанă.
В. ЕЛЛИНСКАЯ фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

ХĔРЛĔ ÇАРТАН КИЛЕ ЯНĂ ВОИНСЕН ЭШЕЛОНĔ ХАБАРОВСК ХУЛИНЧЕН МУСКАВА ÇИТНĔ

Октябрĕн 25-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелтухăç фронтĕнчен киле янă воинсен эшелонĕ Хабаровск хулинчен Мускава çитнĕ. Мĕн пурĕ 1 100 çын таврăннă, вĕсенчен 480-шĕ—Мускав çыннисем.

Вĕсене пурне те питĕ ăшшăн хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Таврăннă воинсене ВКП(б) Железнодорожнăй райкомĕн секретарĕ Алифанов юлташ, столицăри учрежденисемпе предприятисен представителĕсем, чугун çул çинче ĕçлекенсем, таврăннă воинсен тăванĕсемпе тусĕсем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Поезд çитсе чарăнсан, оркестр калама пуçланă, герой воинсем вагонсенчен тухнă. Пур енчен те вĕсене ырă сунса саламланă сасăсем илтĕннĕ.

Хĕрлĕ Çартан таврăннă Мускав çыннисене трамвайсемпе автобуссем çине ларса килĕсене ăсатнă. Ыттисене йĕркеллĕн Мускаври ытти вокзалсене янă, вĕсем унтан чугун çулпа хăйсен тăван [illegible] каяççĕ. (ТАСС)

МЕЛИТОПОЛЬ ХУЛИНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНИ ИКĔ ÇУЛ ТУЛТАРЧĔ

МЕЛИТОПОЛЬ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Мелитополь хулине нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларни икĕ çул тултарать. Фашистла захватчиксенчен хулара ишĕлчĕк куписем çеç тăрса юлнă. Вĕсем заводсене, чи лайăх çуртсене кварталĕ-кварталĕпех аркатса хăварнă.

Хулана ирĕке кăларнă хыççăнах Мелитополь çыннисем хăйсен тăван хулине таврăнма пуçланă. Хулана юсаса йĕркелес тĕлĕшпе вĕсем икĕ çул хушшинче 1.200.000 сехет ĕçленĕ. Халĕ 28 предприятие, 55.000 тăваткал метр пурăнмалли çуртйĕре, 2 института, 3 техникума, нумай шкулсемпе ача-пăча учрежденийĕсене, театрсемпе больницăсене юсаса ĕçе янă. Çав вăхăт хушшинче Мелитопольри предприятисем 35 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Хулана ирĕке кăларни икĕ çул тултарнине Мелитополь ĕççыннийĕсем çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ. Микоян ячĕпе тăракан завод, «23 годовщина Октября» завод хăйсен программисене тултараççĕ. Консерва завочĕ хăйĕн çулталăкри планне тултарать.

КОЛХОЗСЕМ ВАЛЛИ 1.000 КВАЛИФИКАЦИЛЛĔ БУХГАЛТЕР-ИНСТРУКТОРСЕМ ВĔРЕНТСЕ КĂЛАРМАЛЛА

57 республикăра, крайра тата областьра кăçал бухгалтер-инструкторсен квалификацине ÿстермелли пĕр уйăхлăх курссем уçăлаççĕ. Ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче çав курссенчен 1.000 бухгалтер-инструктор вĕренсе тухмалла. (ТАСС).

Суйлав законĕ çинчен пĕлсе тăма

3. Пирĕн суйлавсем тӳрех пулса иртеççĕ

Совет Конституцийĕ тăрăх туса хунă суйлав прависенчен пĕри вăл — совет гражданĕсем тӳрех суйлама пултарни пулса тăрать. Суйлав Положенийĕн 7-мĕш статьинче çапла каланă: «СССР Конституцийĕн 139-мĕш статьи тăрăх, депутатсене суйласси тӳрех пулса иртет: СССР Верховный Совечĕн депутачĕсене граждансем тӳрех суйлаççĕ», тенĕ.

Мĕн-ха вăл тӳрех суйламалли йĕрке?

Тӳрех суйламалли йĕркепе кашни суйлавçă государство власĕн органĕсене тӳрех суйлама пултарать.

Совет Союзĕн Сталинла Конституцине йышăнниччен пирĕн çĕршывра государствăн чи аслă органĕсене тӳрех суйлас йĕрке пулман. Хуласемпе ял Совечĕсене кăна суйлавçăсем тӳрех суйлама пултарнă. Асăннă Советсен депутачĕсене тӳрех суйлав пухăвĕсенче суйланă. Государство влаçĕн аслă органĕсене ĕççыннисем хăйсем суйласа янă представительсем урлă —облаçсенчи, крайсенчи, республикăсенчи тата Советсен Пĕтĕм Союзри съезчĕсен делегачĕсем урлă кăна суйланă.

Совет стройĕ çĕнтерни, пирĕн çĕршывра этеме этем эксплоатацилессине пĕтерни, СССР гражданĕсем чăнниех те пĕртан правăллă пулса тăни хамăрăн суйлав системине вĕçне çитиччен демократизацилеме, нумай степеньлĕ суйлавсем выранне тӳрех суйламалли йĕрке туса хума май пачĕç.

Çĕнĕ Конституцие йышăннăран вара пур Советсен депутачĕсене те—ял Совет, хула, район, облаçпа край Совечĕсен депутачĕсене, автономиллĕ тата союзлă республикăсен Верховный Совечĕсен депутачĕсене тата СССР Верховный Совечĕн депутачĕсене суйлавçăсем тӳрех суйлама пултараççĕ. Çапла вара СССР Верховный Советне те нумай степеньлĕ суйлавсенчи пек ятарласа уйăрнă суйлавçăсем, уполномоченнăйсем е делегатсем урлă мар, граждансем тӳрех суйлаççĕ.

Совет Союзĕн суйлав законĕ Верховный Совета тӳрех суйламалли пур майсене те парать. Закон каланă тăрăх, Союз Совечĕпе Национальноçсен Советне суйлама тăратнă пĕр-пĕр кандидатшăн суйлавçă тӳрех сасăлать. Суйлав Положенийĕн 77-мĕш статьи тăрăх, кашни суйлавçăн сасăламашкăн сасăлакан вырăна хăйĕн пымалла.

Пирĕн суйлав системин никĕсĕсене хакласа, верховнăй органсене тӳрех суйламалли йĕрке ĕççыннисемшĕн лайăхрах, тенĕ Сталин юлташ. Верховный Совета тӳрех суйламалли йĕрке депутатсене хăйсене суйласа янă ĕççыннисен массисемпе таччăнрах çыхăнма май парать. Çавăн пек суйлав йĕрки пулнипе суйлавçăсен кашни ушкăнĕ хăй кама суйланине, камран отчет ыйтма пултарнине лайăх пĕлсе тăрать.

Тӳрех пулса иртекен суйлавсем, тепĕр енчен, ĕççыннисене депутат ĕçне контроллесе тăма лайăх майсем параççĕ. Сталинла Конституцире каланă тăрăх, суйлавçăсен нумайĕш пайĕ йышăнсан, халăх кăмăлне тивĕçтермен депутата суйлавçăсем каялла чĕнсе илме те пултараççĕ.

Сăмах майĕпе çакна та каласа хăвармалла: буржуаллă çĕршывсенче парламент депутачĕсем хăйсен суйлавçисене отчет памаççĕ, вĕсен умĕнче ответ тытмаççĕ. «Суйлавсем пынă вăхăтра,—тенĕ Сталин юлташ Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен пухăвĕнче тухса каланă чухне,—депутатсем суйлавçăсен умĕнче йăпăлтатаççĕ, анă сăмахсем калаççĕ, вĕсемшĕн тăрăшни çинчен шантараççĕ, темĕн чухлĕ сăмах параççĕ. Депутатсем суйлавçăсене пăхăнса тăни палăрсах тăрать. Суйлавсем иртнĕ хыççăн, кандидатсенчен депутатсем пулса тăрсан,—ĕç пĕтĕмпех улшăнать. Депутатсем суйлавçăсене пăхăнас выранне, вĕсене пачах та пăхăнми пулса тăраççĕ. 4 е 5 çул хушшинче, çĕнĕ суйлавсем пуличченех, депутат хăйнехăй ирĕклĕн, халăха, суйлавçăсене пăхăнман пек тыткалать. Вăл пĕр лагерьтен тепĕр лагере, тĕрĕс çул çинчен йăнăш çул çине куçма пултарать, вăл пит килĕшӳллех мар махинацисене хутшăнма, хăй мĕн тăвас тенĕ, çавна тума пултарать,—вăл никама та пăхăнмасть».

Пирĕн вара пĕтĕмпех урăхла. Депутат халăх кăмăлне тумасть пулсан, вăл халăха, суйлавçăсене пăхăнса тăни çинчен манать пулсан, тĕрĕс çултан пăрăнса каять пулсан,—суйлавçăсем хăйсен депутатне срокченех каялла чĕнсе илме пултараççĕ. Депутат—халăх тарçи, хăйне суйласа яракан халăхăн тарçи. Çакă ĕнтĕ вăл чăн-чăн демократи условийĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Патша Российинчи государство Думине суйланă çĕрте çакăн пек демократи нулман, пулма та пултарайман. Патша Думине тӳрех суйламан, суйлавсем ун чухне нумай степеньлĕ пулнă. Уйрăм сословисем, халăхăн уйрăм групписем тăрăх курисем пулнă. Дума депутачĕсене шултăра сĕрхуçисем хăйсене уйрăм, хулари буржуази—хăйне уйрăм, рабочисемпе хресченсем—хăйсене уйрăм суйланă. Çав курисем тăрăх малтан суйлавçăсене суйланă, суйлавçăсем тин вара Дума депутачĕсене суйланă. Рабочисемпе хресченсемшĕн нумай степеньлĕ суйлавсем татах йывăртарах пулнă: вĕсем малтан уполномоченнăйсене суйланă, уполномоченнăйсем—суйлавçăсене суйланă. Хресченсем хăйсен представителĕсене малтан вулăсри пухусенче суйланă. Çав пухусенче суйланă уполномоченнăйсем суйлавçăсене суйланă, хресченсенчен суйланă çав суйлавçăсем тин вара губернири пухусенче депутатсене суйлас ĕçе хутшăннă. Çапла вара рабочисемшĕн висĕ степеньлĕ суйлавсем, хресченсемшĕн—тăватă степеньлĕ суйлавсем пулнă. Суйлавсене çакăн пек кăткăс тата чее механикăпа иртterни халăха хăйĕн шухăш-кăмăлне палăртма ирĕк паман.

Буржуаллă нумай çĕршывсенче ку тарана çитсе те парламентри икĕ палатăран пĕрине—кĕçĕн палатине суйланă чухне çеç суйлавсем тӳрех пулса иртеççĕ. Кĕçĕн палатăсем хăйсен составĕпе çӳлти палатăсенчен демократиллĕрех пулса тăраççĕ, çӳлти палатăна пусмăрлакан классен представителĕсем кăна кĕме пултараççĕ.

Буржуаллă хăшпĕр çĕршывсенче çӳлти палатăн депутачĕсене халăх мар, муниципалитет Совечĕсенчен ятарласа суйланă суйлавçăсем çеç суйлаççĕ. Тепĕр йышши çĕршывсенче çӳлти палатăна пачах суйламаççĕ,—депутатсене унта король уйăрса лартать. Çапла вара буржуаллă çĕршывсенче тӳрех суйламалли йĕркене питĕ хĕссе хураççĕ е пусĕпех пăрахăça кăлараççĕ.

Пирĕн совет обществинче кăна ĕççыннисен депутачĕсен вырăнти Совечĕсене анчах мар, государство влаçĕн чи аслă органне—СССР Верховный Советне те тӳрех суйлаççĕ. Çавăн пек суйлавсем вĕсем халăх массисене политикăллă пурнăçа, государствăна тытса тăрас ĕçе активлăн хутшăнма май параççĕ. Çавăн пек суйлавсем вĕсем чăн-чăн халăх суйлавĕсем пулса тăраççĕ.

Пĕчĕк фельетон

ПУШАР ТУХСАН ВАР ЫРАТАТЬ...

— Хветут, авăн çапма тухатăн-и?

— Вар ыратать.

— Хветут, пăтă çиме ларатăн-и?

— Пысăк кашăк ăçта манăн?..

Çапла каланă юмахра пĕр кахал çинчен.

Пирĕн колхозри пушар дружинин начальникĕ Федот Перцов çак юмаха илт. нĕ-ши,—эпир ăна пĕлместпĕр. Анчах пирĕн колхозниксем Федот Перцов ертсе пыракан пушар дружини çав тери япăх ĕçлени çинчен илтме çеç мар, ăна витĕр курса тăраççĕ.

Пушар мĕн тухас пулсан, Перцов ялан варпа аптăрать. Пушара сӳнтернĕ тенине илтсен, хырăма тултарма пысăк кашăк шырама пуçлать. Ытти чухне вара çемçе вырăн çине вырта ыйăха илетме юратать. Кунĕн-çĕрĕн çывăрса пичĕкуçĕ унăн кӳпчĕк пек, ӳчĕ-пĕвĕ лашман пек сарăлса кайнă. Хăй çеç те мар-ха тата: йытти хыççăн хӳри тенĕ пек, пушар деповĕнчи хуралçăсем те ыйхă чăптине çапма вĕреннĕ. Вĕсем те хăйсен начальникĕ Перцов пекех: çĕрле те—çĕрĕпе, кăнтăрла та—кунĕпе çывăраççĕ. Вăхăт чанĕ çапнă чухне те вара 9 сехет вырăнне 11 сехет, 10 сехет вырăнне 8 сехет çапаççĕ. Картине кĕрсен юрать, тесе шутлаççĕ пулмалла. Сехечĕ те вĕсен хăйсем пекех час-часах «çывăрса каять». Ун пек чухне ыйхăран вăраннă хуралçă пĕр вăхăтрах пĕр талăкшăн, е талăк сурăшăн «авансна» хурал чанне çапса илет.

— Пăхăр, эпир те çывăрмастпăр,—тесе каласшăн пулмалла.

Нумаях пулмасть пĕр тĕттĕм каç колхозра инкек пулнă: мунча çунма пуçланă.

— Пушар! Мунча çунать!—кăшкăрашнă колхозниксем пушар деповĕн чӳречинчен шаккаса. Анчах пушар командине ыйăхран вăратасси çăмăл ĕçех мар. Хуралçăсем вилнĕ пек çывăрнă... Аптăранă енне, колхозниксем депо вышки çине хăпарса кайнă та хăйсемех чан çапма пуçланă.

— Ăçта насус, пакурсем ăçта? Перцов юлташ ăçта çӳрет?—кăшкăрашнă сасăсем илтĕннĕ депо таврашĕнче. Анчах кăшкăрашин ахалех пулнă: дружина начальникĕ Перцов тупăнман. Мĕскĕн мунча çунса кĕл пулнине пушар дружинин начальникĕ курса та юлайман...

Çапла пурăнать Федот Перцов. Пушар тухсан унăн «вар ыратать», пушар иртсен—«пыр ярăнать». Шереметĕн ăçтан ыйхи тухать-ши? Аяк пĕрчи шăммисем ыратмаççĕ-ши унăн?

Вырсарникун çитсен, пасара тухса «çуттине» кӳпсе лартать те, 2—3 талăк пĕр хускалмасăр выртать. Пасар хыççăн мухмăр чĕртмелле... Ăçтан пултăр вăхăт ĕçлеме?

Çавăнпа та пушар деповĕнчи урлă выртана нихăçан та пирлĕ илсе хуни çук. Депора хутма пĕр пуленке вутă çук, ларас тесен пукан çук. Пакур аврисем хуçăк, витре тĕпĕсем шăтăк. Пуртă, кĕреçе аврисем, якăр, пошне тавраш пачах та çук. Депо лаши çынсене ĕçкĕрен ĕçке, хăнаран хăнана турттарса çӳренипех ырханланса кайрĕ: шăмми çеç тăрса юлчĕ унăн. Мĕн чухлĕ асап, мĕн чухлĕ хурапа шурă курчĕ-ши ку лаша Федот Перцов аллине лекнĕрен вара? Юрать унăн чĕлхи çук, вăл калаçма пĕлмест. Калаçма пĕлес пулсан, мĕнле сăмахсемпе вăрçнă пулĕччĕ-ши вăл хăйĕн «хуçине»?

Перцов çинчен ялта ятарласах юрă та хывнă:

«Ял кахалĕ депора
Пурăнать мĕн савăнса,
Кунĕн-çĕрĕн çывăрсах
Ĕçкунĕсем сыртарса» тесе юрлаççĕ колхозра.

Ку юрра колхоз председателĕпе районри пушар инспекторĕ те илтнĕ. Илтнĕ те, илтмĕш пулаççĕ пулмалла.

Ник. АНДРЕЕВ.

Пĕрлешнĕ нацисен уставĕ законлă пулса тăнă

ВАШИНГТОН, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 24-мĕшенче Гринвич вăхăчĕпе 1 сехет те 45 минутра Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарĕ Бирнс Пĕрлешнĕ нацисен уставĕ законлă пулса тăни çинчен калакан протокола ала пуснă. Государство департаментĕнче çак ĕçе йышлă фоторепортерсем ӳкерсе илнĕ. Бирнс çапла каласа панă:

«Паян Совет посольствин представителĕ государство департаментне Совет правительствин документне пачĕ. Çав документ Совет Союзĕ Пĕрлешнĕ нацисен уставне çирĕплетни çинчен калать. Мĕн пурĕ 29 çĕршыв, вăл шутра Пĕрлешӳллĕ Штатсем, Китай, Франци, Пĕрлешӳллĕ Королевство, хăйсен правительствисем Пĕрлешнĕ нацисен уставне çирĕплетни çинчен калакан грамотăсем тăратрĕç. Пĕрлешнĕ нацисен уставĕ хальхи вăхăтра нацисен законĕ пулса тăмĕ. Паянхи кун мĕнпур тĕнчери мирлĕ пурнăçа юратакан халăхсемшĕн паллă кун пулса тăчĕ. Эпĕ пĕрре çеç каламан ĕнтĕ. тĕнчери мирлĕ пурнăçа сыхласа тăрасси пĕр-пĕр документран килмест, вăл çынсен шухăшĕсемпе вĕсен туйăмĕсенчен килет. Анчах та çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакан мирĕн çунакан халăхсен пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăçа сыхласа тăма пĕрлешмелле, хăйне уйрăм организаци тумалла. Çитес кунсенче эпир, çав мирлĕ пурнăçа сыхласа тăрас тесе тата лайăх пуранмалла пултăр тесе, ытти халăхсемпе пĕрле мĕн тума май килнине пурне те тăвапăр. Çак сехетре эпĕ телейлĕ, мĕншĕн тесен эпĕ çак чаплă протокола ала пусма тивĕçлĕ пултăм. Пĕрлешнĕ нацисен уставĕн 110-мĕш пунктĕнче каланă тăрăх, çак протокол Пĕрлешнĕ нацисен уставĕ паянтан пуçласа законлă пулса тăнине çирĕплетсе парать».

Франкопа çыхăну тытма пăрахма тата Испанири фашистла йĕркене пĕтерме ыйтни

«АМЕРИКАНЕЦСЕН ИСПАНИЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН КОМИТЕЧĔ» ЧĔНСЕ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Бостонри епископ Хартман, «Американецсен Испание ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитечĕн» председателĕ пулса ĕçлекенскер, хаçатсене çапла каласа панă: комитет Трумэна çыру ячĕ, çав çырура вăл Пĕрлешӳллĕ Штатсене Франко Испанийĕпе çыхăну тытма халех пăрахма сĕнет. Испание фашистсен пĕтĕм тĕнчене пăхăнтарас шухăшне çĕнĕрен чĕртсе ямалли çĕршыв пулса тăма памалла мар, тенĕ çырура.

Çав комитет государство департаментне тата представительсен палатипе сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсене пăхакан комиссийĕсен председателĕсене те çырусем янă. Çав çырусенче вăл государство секретарĕн помощникне Брэдена çапла тума хушма сĕннĕ: Брэден пĕтĕм Америкăри конференцире тата пĕтĕм тĕнчери хаçатсене Франко фаланги Хĕвеланăç сурчăмăрĕнче тата Филиппин утравĕсем çинче тĕнел держависен представителĕсене пулăшни çинчен секретлă материалсем вуласа патăр, тенĕ. Çырура тата çапла каланă: çавăн пек материалсем государство департаменчĕн, Америка çарĕпе тинĕс-çар флочĕн разведка служби, Хĕвеланăç сурчăмăрне политика енчен хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен чрезвычайнăй комитетăн тата правительство организацийĕсен ыттисен те пур. Комитет Пĕрлешӳллĕ Штатсене Испанин США-ри фончĕсене тытса илме тата Франкопа суту-илӳ тума пăрахма сĕнет.

ФРАНКО ПУÇКАСАКАНĔСЕМ ТЫТСА ХУПНĂ ПАТРИОТСЕНЕ ВĔЛЕРМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, испанецсен Лондонра эмиграцире пурăнакан республиканецĕсем Испанири ĕç конфедерацийĕн вăрттăн ĕçлекен наци комитетĕнчен телеграмма илнĕ. Телеграммăра çапла каланă: ĕç конфедерацийĕн Франко влаçĕсем тытса хупнă 22 членне Кадикс хулинче суд тума хатĕрленеççĕ, тенĕ. Испанирен вăрттăн янă çав телеграммăра наци комитечĕ «çакăн çинчен демократиллĕ çĕршывсене пĕлтерме ыйтать, мĕншĕн тесен суд вĕсене вĕлермелле тăвать пуль», тет.

ШВЕЦИРИ РАБОЧИСЕМПЕ СЛУЖАЩИСЕМ УЧРЕЖДЕНИСЕНЧЕН ФАШИСТСЕНЕ КĂЛАРСА ЯМА ЫЙТАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Стокгольмри трамвайсен управленийĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисем Мальма хулинчи вырăнти профсоюз организацийĕсемпе демократиллĕ партии организацийĕ йышăннă резолюцие ырлаççĕ. Çав резолюцире Швецири государство аппаратĕнчен фашистла элементсене кăларса яма ыйтнă пулнă.

Стокгольмри рабочисемпе служащисен резолюцийĕнче çапла каланă: «Эпир вырăнти фашистсене хирĕç татăклă мерăсем йышăнма тата ют çĕршыв фашисчĕсене Швецирен кăларса яма ыйтатпăр».

«БАЛКАНРАН АМЕРИКĂНА КУÇСА КАЙНĂ СЛАВЯНСЕН ПĔРЛЕШНĔ КОМИТЕЧĔН» СЪЕЗЧĔ

КЛИВЛЕНД, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта «Балканран Америкăна куçса кайнă славянсен пĕрлешнĕ комитечĕн» çуллен пулакан съезчĕ пулса иртнĕ. Съездра темиçе çĕр делегат пулнă. Вĕсем унта Балканран Америкăна куçса кайнă миллион славян ячĕпе пынă. Комитет председателĕ Балакович доклад тунă. Вăл хăйĕн докладĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Балканри çĕршывсем тĕлĕшпе тытса пыракан политикине хытă критиклăланă.

Делегатсем Трумэн президента çыру янă. Вĕсем çав çырура, Югославири лару-тăру çинчен каланă май, çакна палăртса панă: «Тито Европăри халăхсен чи аслă çĕнĕ лидерĕсенчен пĕри пулса тăрать, вăл Югославири пурнăçа, çавăн пекех тата пĕтĕм Европăри пурнăçа йĕркене кĕртме тăрăшать», тенĕ.

Съезд Тито маршала салам янă. Çав саламра çапла каланă: «Çитес суйлавра Югослави халăхĕ Югославие политика, экономика тата наци тĕлĕшĕнчен ирĕке кăларассишĕн пуринчен те лайăхрах çапăçнă çынсене суйласа лартассине эпир шанса тăратпăр», тенĕ.

РУМЫНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Румынири коммунистсен партийĕн конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференци партин Центральный Комитечĕн политикăллă отчетне сӳтсе явнă, парти уставне йышăннă тата партин Центральный Комитетне суйланă. Партин Центральный Комитетĕнче 27 член, 8 кандидат. Центральный Комитетăн ларăвĕнче политика бюровне суйланă. Çав бюрова çаксем кĕреççĕ: Георгиу Деж, Анна Паукер, В. Лука, Теохари Жоржеску, Киву Стойка, Г. Василики, Мирон Константинеску. Партин Центральный Комитечĕн секретарĕсем пулма çаксене суйланă: Георгиу Деж, Анна Паукер, В. Лука тата Теохари Жоржеску.

ЧЕХОСЛОВАКИРИ СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТСЕН ПАРТИЙĔН СЪЕЗЧĔ

ПРАГА, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Прага хулинче Чехословакири социал-демократсен партийĕн съезчĕ пулса иртнĕ. Съездра 1.028 делегат тата 503 хăна пулнă, вĕсенчен 10-мĕш ют çĕршывсенчен пынă.

Съезд партин ертсе пыракан органĕсене суйласа лартнă. Партин çĕнĕ Центральный Комитетĕнче 49 член, 49 кандидат. Партин Исполнительный комитечĕн председателĕ пулма Чехословаки премьер-министрне Зденек Фирлингера суйланă. Унăн заместителĕсем—Лаушман министр, Юнгвиртова депутат тата Тимеш депутат.

Съезд, социал-демократсен партийĕн кивĕ ятне пăрахса, çĕнĕ ят панă, малашне ку парти «Чехословакири социальнăй демократи партийĕ» ятлă пулать.

ЛЮКСЕМБУРГРИ СУЙЛАВĂН ИТОГĔСЕМ

ПАРИЖ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Люксембург парламентне суйланин результачĕсене пĕлтерет: христианла социалистсен партийĕнчен (консерваторсенчен)—24 депутат суйланă (вăрçăчченхи парламентра вĕсен 25 депутат пулнă); социалистсен партийĕнчен 12 депутат суйланă (вăрçăччен 18 депутат пулнă); патриотла демократсенчен 8 депутат суйланă (вăрçăччен вĕсен пĕр депутат та пулман); коммунистсенчен 5 депутат суйланă (вăрçăччен пĕр депутат та пулман); независимăй демократсенчен 2 депутат суйланă (вăрçăччен 6 депутат пулнă). Люксембург парламентĕнче ку таранччен коммунистсен партийĕнчен суйланă депутатсем пулман.

ЛЮКСЕМБУРГ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 24-мĕшĕнче Люксембург премьер-министрĕ Пьер Дюпон Люксембург правительстви пĕтĕмĕшпех вырăнтан тухни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Люксембург правительстви октябрĕн 21-мĕшĕнчи суйлавсем ĕçленнĕ май вырăнтан тухнă.

Америкăри радио Япони полицийĕ çинчен

САН-ФРАНЦИСКО, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискăри радио çапла пĕлтерет: Япони премьер-министрĕ Сидехара хăй пурнăçа кĕртме шутлакан реформăсен списокне Макартур генерала пама хатĕрленет, çав реформăсене вăл Макартур нумаях пулмасть панă инструкцисем тăрăх пурнăçа кĕртме шутлать. Уйрăм илсе кăтартсан, Япони правительстви полици хисепне 70.000 çынтан 183.000 çынна çитиччен ӳстересшĕн. Çак цифра мĕне пĕлтернине ăнланса илес тесен, çакна çеç аса илмелле,—тет радио:—1925-мĕшпе 1928-мĕш çулсем хушшинче Японин пĕтĕм çарĕнче те 200.000 çын кăна пулнă. Халĕ японецсем хăйсен мирлĕ вăхăтри полицийĕн йышне 183.000 çынна çитиччен ӳстерме тăрăшаççĕ. Çакă вăл дисциплинăллă тата лайăх вĕреннĕ хĕçпăшаллă çынсен пысăк организацине туса хума тăрăшнине пĕлтерет.

ИТАЛИ СОЮЗНИКСЕНЧЕН ÇАР МАТЕРИАЛĔСЕМ СУТĂН ИЛНИ

РИМ, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). АНСА агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксемпе Итали влаçĕсем килĕшӳ тунă. Çав килĕшӳ тăрăх Итали союзниксен усă курман çар материалĕсене 300 миллион лирăлăх сутăн илет. Вăл шутра машинăсем, транспорт хатĕрĕсем, радиотелеграфпа телефон çыхăнăвĕн хатĕрĕсем, вăрман материалĕсем, медицина хатĕрĕсем пур. Малашне Итали правительствине чугун çул материалĕсене, вăл шутра паровозсемпе вагонсем 1.600 миллион лирăлăх сĕнеççĕ. Çав материалсемшĕн Итали Итали лирĕпе тӳлемелле.

АМЕРИКА ÇАРĔНЧЕ КИЛЕ ЯРАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫРАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, генеральнăй штаб начальникĕн помощникĕ бригада генералĕ Беври сенатăн çарĕç тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕнче çапла каланă: октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне Америка çарĕнче 6.990.000 çын юлнă. Вăл шутран Атлантика океанĕн районĕнче — 1.930.000 çын, Лăпкă океан районĕнче —2.010.000 çын, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче—3.050.000 çын юлнă. Ноябрь уйăхĕнче тата 1.100.000 çынна çартан киле ямалла.

ИРАН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ТЕГЕРАН, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Сетаре» тата «Иран» ятлă хаçатсем çапла пĕлтернĕ: премьер-министр Садра вырăнтан тухнипе шах килĕшнĕ, анчах та ăна 2—3 кун хушшинче, çĕнĕ премьер-министр çинчен меджлис хăйĕн шухăшне каласа пачиччен, хăйĕн ĕçĕсене туса тăма сĕннĕ.

ИРАНĂН ÇĔНĔ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ

ТЕГЕРАН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 24-мĕшĕнче каçхине меджлис хупă лару туса ирттернĕ. Ларура премьер-министр пулма вăрттăн сасăласа Хакимие суйласа лартнă.

КĔСКЕН

Венгрири чи пысăк вăрçă преступникĕсенчен пĕрне—премьер-министр пулса ĕçленĕ Бардоши Ласлона айăплакан хута çырса пĕтернĕ. Унăн ĕçне суд октябрĕн 28-мĕшĕнче пăхма пуçлать.

Тĕрĕсленĕ материалсем тăрăх

„КОЛХОЗ ТЫРРИНЕ ПЫТАРСА ХĂВАРАÇÇĔ“

Пирĕн редакцие Элĕк районĕнчи Хитекушкăн ялĕнчи «Новый путь» колхоз кладовщикĕ С. Лукин игем çинчен тырра тĕрĕс мар виçсе кĕртнĕ пирки складра 34,4 центнер тыра ытлашши тухни çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Çак ĕçе колхоз счетовочĕ И. Скворцов пытарса хăварма шутланă пулнă. Çавăнпа пĕрлех çак колхозра аслă конюх пулса ĕçлекен С. Михайлов вылькăх апатне вăрлани çинчен çырнăччĕ.

Пире Элĕк районĕнчи прокурор çак материалта кăтартнă фактсем пурте тĕрĕс пулни çинчен çырса пĕлтерчĕ.

Элĕк районĕнчи халăх сучĕ çак ĕçе хăйĕн усă ларăвĕнче пăхса тухса, «Новый путь» колхоз кладовщикне С. Лукина тата колхоз счетоводне И. Скворцова 8-шар çуллăха тĕрмене хупмалла тата колхозăн аслă конюхне С. Михайлова 2 çуллăха суд тунă.

„Çĕнтерӳ“ колхоз çыннисем

Вăрнар районĕнчи «Çĕнтерӳ» колхоз членĕсем Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç.

Вăрçăччен колхозăн акăнакан çĕр лаптăкĕ 600 гектара яхăн пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче вара акакан çĕр лаптăкне чылай ӳстернĕ. Кунти колхозниксемпе колхозницăсем кăçал 670 гектар çинчи тырпула вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пуххса кĕртнĕ. Ку ĕçре колхоз районри малта пыракан колхозсенчен пĕри пулчĕ. Тырпула пухса кĕртнĕ вăхăтра пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа тунă. Ватти-вĕтти пурте хирте пулнă, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçленĕ.

— Тырпула пухса кĕртес ĕçре çитĕнӳсем тума пире политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелени пулăшрĕ. Эпир партипе правительствăн решенийĕсене колхозниксене вăхăтра ăнлантарса панă, —тет колхозри агитколлектив руководителĕ П. Печников юлташ.

Агитколлектив пĕчĕк мар. Унта коммунистсемпе комсомолецсем, учительсем, малта пыракан колхозниксем 15 çын тăраççĕ. Вĕсене кашни бригада çумне 2-шер çын çирĕплетнĕ. Агитаторсемпе вулавçăсем яланах колхозниксемпе пĕрле ĕçре пулнă, кашнă вăхăтра калаçусем ирттернĕ тата хаçатсем вуласа панă. Кунсăр пусне, колхозри тата бригадăсен чи стенаă хаçачĕсене йĕркеллĕ кăларса тăнă. Тырпула пухса кĕртнĕ вăхăтра кăна колхозра «Вайлă тырпулшăн» стенгазечĕн 13 номер тухнă, унта яланах сырса тăракансем 15—20 çын шутланаççĕ.

Агитаторсенчен уйрăмах Г. Спиридонов (Отечественнăй вăрçă инвалидĕ), И. Кузнецова, М. Константинова юлташсем лайăх ĕçленине палăртмалла.

Кунта социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пынă. Бригадăпа бригада, звенопа звено, колхозникпе колхозник ăмăртса ĕçленĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче колхозра тĕп вăй пулса тăнă ача-пăчаллă хĕрарăмсем О. Егорова, Н. Егорова, Е. Михайлова, О. Гаврилова, М. Никифорова, Е. Матвеева, М. Петрова, Е. Тимакова тата ыттисем те алăпах куллен 0,25—0,30 гектар тыра вырса пынă.

Колхозра вăй-питти арçынсем çук пирки жнейкăсемпе те çамрăк ачасемех ĕçленĕ. Вĕсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнă. Çамрăк ачасем П. Николаев, Г. Матвеев, Г. Иванов юлташсем нормăпа 5 гектар вырас вырăнне куллен 6—7-шер гектар вырса пынă. Пĕтĕмпе вĕсем кăçал 125 гектар тыра вырса пуçтарнă.

Ватă çынсем И. Яранский, И. Наянов, Г. Филиппов юлташсем мĕн кĕлте кӳрсе пĕтеричченех капансем тунă. Норма тăрăх куллен 30 лав капана хывас вырăнне вĕсем кашниех 50—60-шар лав капана хывса пынă. 65 çулхи М. Матвеева, 70 çулхи П. Краснов кĕлте кӳнĕ çĕрте ĕçлерĕç. Пĕр километртан 20 лав кӳмелле пулсан, вĕсем куллен 35—40-шер лав кӳрсе пынă. Колхоз пĕтĕм тырра сентябрĕн 21-мĕшĕнче капана хывса пĕтернĕ.

Тырпула пухса кĕртес ĕçсем пуçлансанах колхозниксем государствăна тыра тата ытти продуктсем срокчен парса татма пулчĕç. Ку тĕлĕшпе ятарласа транспорт бригади тунă. Çав бригада кунĕн-çĕрĕн хатĕрлев пунктне тыра леçсе тăнă. Çапла сентябрĕн 19-мĕшĕнче, районра чи малтан, колхоз государствăна тыра памалли плана тултарнă. Халĕ планран ирттерсе параççĕ. Çĕрулмипе пахчаçимĕçсене те вăхăтра пухса кĕртнĕ. Государствăна çĕрулми памалли плана та тултарнă, пахчаçимĕç парса татнă.

Паянхи куна авăн çапса пĕтернĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех 340 гектар кĕрхи çĕртме тунă.

— Кĕрхи çĕртмене эпир кăçал уйрăмах лайăх сухаларăмăр. Кĕрхи тыра калчисем те хĕле лайăх кĕреççĕ, вĕсене минераллă удобренисемпе апатлантартăмăр. Çапла эпир çитес çулхи вăйлă тырпулăн никĕсне хывса хăвартăмăр,—тет «Çĕнтерӳ» колхоз председателĕ «За трудовую доблесть» медаль илнĕ П. Андреев юлташ.

«Çĕнтерӳ» колхоз çултан çул вăйлă тырпул туса илет. Кăçал кашни ĕçкунĕ пуçне 2,5 килограмран кая мар тĕштырă валеçсе пама шутлаççĕ.

— Хамăрăн çĕнтерӳçĕ-воинсене эпир тулăх та культурăллă пурнăçпа кĕтсе илетпĕр,—теççĕ колхозниксем.

Е. ВОЛКОВ. (Хамăр корр.).

ШАШКĂПА ШАХМАТ ТУРНИРĔ

Н-ски чаçри чăваш красноармеецĕсен шашкăпа шахмат турнирĕ пулса иртрĕ. Турнира 7 красноармеец хутшăнчĕ.

Турнирта 1-мĕш вырăна гвардии старши сержанчĕ К. В. Иванов—(6 очко), 2-мĕш вырăна красноармеец Н. Т. Смирнов — (5 очко) тухрĕç.

Турнирта малти вырăна тухнă Ивановпа Смирнов юлташсене командовани тав турĕ тата укçа парса премилерĕ.

Г. РАХМУЛЛИН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тарасасем юсакан завода Шупашкарти, Канашри, Улатăрти, Етĕрнери, Çĕмĕрлери тата Чкаловскри тарасасем юсакан мастерскойсенче ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: слесарьсем, тараса мастерĕсем, жестянщиксем, лудильщиксем тата хуралçăсем. Çав ĕççене вĕренекен учениксене те илеççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, улица Ворошилова, 46.

Государство банкĕн Чăваш республикинчи конторине ялан ĕçлеме старши бухгалтерсем, старши кредит инспекторĕсем, кочегарсем, истопниксем, склад заведующийĕсем, снабжени агенчĕ, архиварнус, экспедитор, дворник тата конюхсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 25, комната 19. Телефон 1—23.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, ебсельнсосен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

ПЦ 00436 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.